

# РАЙОН МУЗЕЙĔ — аваллăх управçи

В. КОНСТАНТИНОВ,
районти историпе краеведени халăх музейĕн директорĕ

Районти историпе краеведени халăх музейĕ хамăр тăрăхра пурăнакансен тавра курăмĕпе пĕлĕвне ÿстерес çĕрте пысăк вырăн йышăнать. Хамăр ен еплe аталанса пынине, кунта çуралса ÿснĕ, ĕçлесе пурăннă мухтавлă ентешсем çинчен пĕлни ĕлĕкхипе хальхи ăрусем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетет. Çакă вара несĕлсен ырă йăли-йĕркине тĕпчесе ăна малалла аталантарма хистет.

Шăпах ăрусен çыхăнăвне тытса тăракан экспонатсем упранаççĕ те районти краеведенипе историн халăх музейĕнче. Çак тĕллевпех кунта çĕнĕ экспозицисем йĕркеленĕ, тĕрлĕ выставкăпа экскурси, лекципе калаçу ирттереççĕ. Халĕ пирĕн патра, малтанхисене шутламасăр, "Вĕсем патшалăх наградисене тивĕçнĕ", "Ентешсем — Патшалăх Пухăвĕн, СССР, РСФСР, Чăваш Республикин Аслă Канашĕн депутачĕсем", "Тĕнче уçлăхне тĕпчеме хутшăннă ентешсем", "Чăваш Республикинчи пĕрремĕш электрификатор Г. Новоселов", "Интернационалист-салтаксем" çĕнĕ экспозицисем пур.

Район музейне кăçалхи 5 уйăхра пурĕ 1064 çын пырса курнă. Вĕсенчен тĕп пайĕ — шкул ачисем. Кăçал, Ача çултталăкĕ пулнă май, ку мана пушшех те савăнтарать. Музейпа тачă çыхăну тытакан Трак гимназийĕ (директорĕ Г. И. Юлмасова), пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан 2-мĕш тата Пикшикри вăтам шкулсен (директорĕсем С. М. Николаева тата А. И. Гаврилов) коллективĕнчи педагогсене тав тăватăп. Вĕсемпе яланах пĕр чĕлхе тупма пулать. Акă, "Тĕнче храмĕсем", Чăваш Республикин патшалăх символĕсене тата чăваш чĕлхине халалланă выставкăсене те (юлашкинчен "Чебурашкăпа" "Çеçпĕл" ача садне çÿрекенсем те хастар пулчĕç) пырса курчĕç.

Районти тавра пĕлÿçĕсене çапла чĕнсе каласшăн. Малашне те хăвăр тăрăхри пулăмсем, паллă çынсем, уявсем çинчен çырсах тăрăр. Паллă кунсем пирки ял тăрăхĕсенче список пулма тивĕç. Музей ĕçне хаклакан çынсемпе спонсорсенчен яланах пулăшу кĕтетпĕр: пирĕн-шĕн сăрă та, таса хут-журнал та, укçа-тенкĕ те, чĕререн парнеленĕ кирек еплe япала-хатĕр те, пурте хаклă.

Иртнĕ кунсенче пир тĕртмелли станока ĕçлемелле тунишĕн вăтă çынсене уйрăмах пысăк тав! Вячеславпа Александра Новоселовсене музея парнеленĕ япаласемшĕн — тавтапуç.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем, музей алăкĕ сирĕншĕн яланах уçă.




Пир тĕртмелли станок — ĕçре.